26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 ИЮЛЬ 17 ШАМАТКУН 145(6382) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Тырпула хӑвӑрт тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртер

Хӗрӳ ӗç вӑхӑчӗ пуçланчӗ. Республикӑри хӑшпӗр колхозсенче уйрӑм участоксем çинче ыраш пулса çитрӗ. Июлӗн 14—15-мӗшӗсенче Калинино районӗнчи «Первомайски», «Броневик», «Трактор», Елчӗк районӗнчи «КИМ», Ворошилов, Тимирязев ячӗсемпе тӑракан тата «Вторая Пятилетка» колхозсем, Чкаловски районӗри Крупская ячӗпе тӑракан, «Пламя Октября» колхозсем суйласа илсе ыраш вырма тытӑнчӗç.

Çапла ӗнтӗ тырпулсене пухса кӗртмелли хӗрӳллӗ кунсем килсе çитрӗç. Тепӗр тӑ-виçӗ кунран республикӑри ытти районсенче колхозсем те тырӑ вырма тытӑнмалла.

Çуракине пирӗн республика кӑçал пӗлтӗрхи çултинчен 12 кун маларах туса ирттерчӗ. Çапла лайӑх тӑнӑ тырӑсене тухӑçлӑн ӳсме май пачӗ. Колхозла ял тӑван çӗршывпа Хӗрлӗ Çара кӑçал татах та тухӑçлӑ тырӑ ӳстерсе парать. Анса пулнӑ тырпула вӑхӑтра пысӑк шахалӑхпа пухса кӗртесси—халӗ колхозсемпе МТС-сем умӗнче тӑракан чи пысӑк задача.

«Тырпула пухса кӗртесси вӑл—сенокра тумалли ӗç, вӑл кӗтсе тӑма юратмасть. Вӑхӑтра пухса илтӗн—туянтӑн, кая юлтӑн—çухатрӑн». Аслӑ çулпуç Сталин юлташ çапла вӗрентнине кӑçал та пирӗн çирӗп асра тытмалла. Пуян ӳснӗ тырпула вырса пухма вӑхӑтра тытӑнас пулать, вӑл ӗçе организованно тухас пулать. Ялхуçалӑхӗнчи мӗнпур работниксем, ялти кашни коммунистпа комсомолец, кашни колхозникпе колхозница, МТС-сенчи работниксем хӑйсен пӗтӗм вӑйне хурса ырмансӑр ӗçлесен кӑна эпир тырпулсене пухса кӗртес ӗçе, çуракине ирттернӗ пекех, ӑнӑçлӑн туса ирттерме пултаратпӑр.

Уборкӑна тухма хатӗрленес ӗçсене пур колхозсенче те паян-ыранах вӗçлес пулать. Тырпулсене пухса кӗме хатӗрленсе çитмен районсем е колхозсем пулмалла мар ӗнтӗ. Тӗрӗслӳ комиссийӗсем кӑтартса панӑ çитменлӗхсене халех пӗтермелле. Колхозсемпе МТС-сен машинисем, ӗç хатӗрӗсем, турттӑм вӑйӗсем ӗçе тухма хатӗр тӑмалла.

Юсаса çитермен комбайнсем, жнейкӑсем, молотилкӑсем, косилкӑсем пулсан, вӗсене паянах, ырана хӑвармасӑр, юсаса çитерес пулать. Тӑхтаса тӑма текех вӑхӑт çук, хатӗрленмелли вӑхӑтсем иртсе пыраççӗ, халӗ ӗçе тытӑнмалла.

Уборка вӑхӑчӗ—хӗрӳллӗ вӑхӑт. Пирӗн пӗр вӑхӑтрах темиçе тӗрлӗ ӗç туса пымалла пулать. Тырӑ выраççи те, авӑн çапасси те, капансем тӑваççи те, государствӑна тырӑ параççи те вӑхӑтра тата ӑнӑçлӑн пулса пытӑр тесен, ӗç вӑйӗпе туртӑм вӑйне тӗрӗс вырнаçтарса тухас пулать. Çакна кашни колхоз председателӗн, ялта ӗçлекен кашни работникӑн ӑнланса илмелле. Ӗç вӑхӑтӗнче колхозра дисциплина хурçӑ пек çирӗп пултӑр, кашни çын уйхирте пӗтӗм вӑйран ӗçлетӗр. Кашни колхозникпе колхозница хӑйсен ӗç вырӑнне пӗлсе тӑччӑр, ыран хӑçан ӑçта ӗçлемелли паянах паллӑ пултӑр.

Тырпулсене тӗллӗн-тӗллӗн суйласа выраççи, паллах, çурлапа пуçланать. Анчах тырӑ пысӑкрах лаптӑксенче пиçсе çитсенех, машинӑсене ӗçе анлӑн хутшӑнтармалла. Жнейкӑпа, лобогрейкӑпа, кӗреплеллӗ çавапа выраççине малти вырӑна хурас пулать. Çакӑ вӑл пире уборка ӗçӗсене хӗрлӗ хӑвӑртлӑхсемпе туса пыма май парать. Машинӑсене хакламанни кӑçал пачах ан пултӑр. Çӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт» колхоз иртнӗ çулта хӑйӗн 5 жнейкине (пурте çӗнӗскерсем) итем çинчи сарайӗнче ахалех лартнӑ. Çапла, лайӑх ӗçлеме пултаракан колхозах машинӑсене хакламан пирки иртнӗ çул уйхир ӗçӗсене вӑрӑма ячӗ. Авӑн çапассине январь уйӑхӗ тӗлне çеç вӗçлерӗ. Çакӑн пек тӗслӗхе кӑçал пачах тӳсмелле мар. Машинӑсемпе ӗçлессине хакламаççӗ пулсан, çавӑн пек колхозсен машинисене ытти колхозсене куçармалла.

Кашни комбайн, жнейка талӑкра 16 сехетрен кая мар ӗçлемелле, кашни молотилкӑпа кунне 20 сехетрен кая мар авӑн çапмалла.

Тырпулсене пухса кӗртес ӗç те — фронт. Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Çар вӑрçӑ фронтӗнче историре пулман паттӑрлӑхпа хастарлӑх кӑтартса çапӑçать. Ӗнер пӗтӗм совет халӑхӗ радио тӑрӑх савӑнӑçлӑ çӗнӗ хыпар илтрӗ. Орел хулинчен çурçӗртерехре тата хӗвелтухӑçнерехре вырнаçса тӑнӑ пирӗн войскӑсем тӑшмана хирӗç ӑнӑçлӑ наступлени пуçланӑ. Пирӗн войскӑсем, тӑшман хирӗç тӑнине çӗнтерсе, хӗвеланӑçнелле ӑнӑçлӑн куçса пыраççӗ. Хӗрлӗ Çар татах халӑх пурӑнакан 110 пункта сыхӑсен Гитлер пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларчӗ.

Ялхуçалӑхӗнчи работниксем, колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-сенчи трактористсемпе комбайнерсем! Ӑнӑçлӑн ӳстернӗ тырӑсене вӑхӑтра, пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртер! Хӗрлӗ Çара çӗнӗрен пысӑк пулӑшу парар!

„Сӑлтӑр" колхоз виçӗ гектар ыраш вырчӗ

ТӐВАЙ, июлӗн 16-мӗшӗ. (Телефонпа). Енер районӗнчи 8 колхоз уйрӑм участоксенче суйласа тырӑ вырма тухрӗç. Малтанхи кун пурӗ 9 гектара яхӑн ыраш вырнӑ. Пӗрин ыраш вырма Чапаев ячӗпе тӑракан, «Культура», «Коммунар», Ленин ячӗпе тӑракан, «Искра Ильича», Шмидт ячӗпе тӑракан, «Заря» колхозсем тухнӑ. Лашкассинчи «Сӑлтӑр» колхоз паянхипе иккӗмӗш кун уйрӑм участоксенче ыраш вырать. Июлӗн 15-мӗшӗнче колхоз виçӗ гектар ыраш вырчӗ.

А. КАХОВСКИЙ.

7 колхозра тырӑ вырас ӗç пуçланчӗ

КАЛИНИНО, июлӗн 16-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). Уйрӑм колхозсенче ыраш тӗллӗ-тӗллӗн пулса çитнӗ. Çав участоксенче паян 7 колхоза тырӑ вырма тытӑнчӗç. Анчах пурнӑй колхозсенче тырӑ вырмалла пулса çитейменӗ-ха. Тепӗр кун тӑхтасан пур колхозсем те тырӑ вырма тытӑнӗç.

С. ШАДИН.

МТС тырӑ вырма хатӗр

ЭЛЕК, июлӗн 16-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). МТС коллективӗ 1943 çулхи тырпула вӑхӑтра тӗплӗн пухса кӗртме тӑрӑшать. Пур машинӑсене те çирӗп юсанӑ. Ку кун тӗрӗслӳре те лайӑх хатӗр [illegible]. Комиссия юсава пысӑк хак пачӗ.

Тӗрӗслӳ иртнӗ хыççӑн палӑрнӑ пӗчӗк çитменлӗхсене те МТС пӗтерчӗ. Тырӑ вырма 8 комбайн, 8 жнейка хатӗр лараççӗ. Трактор вӑйӗпе ӗçлекен молотилкӑсем 10. Вӗсем пурте юсавлӑ. Колхозсем итемӗсене хатӗрлесе çитерчӗç. [illegible]

Казрсем вӗрентсе хатӗрлесе ӗç кӑçал МТС-ра [illegible] пулчӗ. МТС курсӗнчен 30 механизатор вӗренсе тухрӗ. 14 çынна сложнӑй молотилкӑсем машинисчӗсем пулма вӗрентнӗ, комбайна ӗçлеме 6 çынна, комбайнера пулӑшакансем пулма 10 çынна хатӗрленӗ.

Х. ЛИСИН.

Хӗрӳ ӗç вӑхӑтӗнче — нимере

ШАХАСАН. (Хамӑр корр.). [illegible] «Победа» колхоз (председателӗ Тимофеев юлташ) [illegible]. Çавна пула тырпул тухӑçӗ те пачах пулать. Колхоз кӑçал та çум çулласа ӗçе ячӗпе çеç турӗ. 16 гектар çинчи сӗлӗ халӗ те çум айӗнче.

Хаяр колхозсем хӗрӳллӗ ӗç тӑватӑççӗ, кӗрхи ыраш вырма тытӑннӑ. [illegible] Тимофеев юлташ нимере пуçтарса [illegible]. Машинӑсене юсама пуçламан. [illegible]

Уборка тухмаччен ишӗлнӗ тухмалла. Анчах тӗрӗслӳ иртнӗренпе 1 кун иртрӗ. [illegible] Тимофеев юлташ хӑйне пек ыттисене те [illegible]. Çав вӑхӑтрах колхозра тӗрлӗ ӗçсене пачах тӑваймаççӗ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Нимӗçсен фашистла захватчикӗсем тата вӗсемпе пӗр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайӗн территорийӗ çинче вӗсене вӑхӑтлӑха оккупациленӗ тапхӑрта тунӑ тискер ӗçсем пирки пыракан

СУД ПРОЦЕСӖ

Кӑçалхи июлӗн 14-мӗшӗнче Çурçӗр Кавказри Н. хулинче Военнӑй Трибунал, юстици полковникӗ **Н. Я. Майоров** юлташ председатель пулса тӑнипе тата государственнӑй обвинитель юстицин генерал-майорӗ **Л. И. Яченин** юлташ хутшӑннипе çак ӗçе—нимӗçсен фашистла захватчикӗсем тата вӗсемпе пӗр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайӗн территорийӗ çинче вӗсене вӑхӑтлӑха оккупациленӗ тапхӑрта тунӑ тискер ӗçсем çинчен калакан ӗçе пӑхса тухма тытӑннӑ.

Çак ӗç тӑрӑх РСФСР Уголовнӑй Кодексӗн 58-1 «а» тата 58-1 «б» статйисемпе пӑхнӑ преступленисемшӗн (тӑван çӗршыва сутнишӗн) айӑпласа çак çынсене суд аллине панӑ: **И. Кладов, И. Котомцев, М. Ластовина, Г. Мисан, Ю. Напцок, В. Павлов, И. Парамонов, Н. Пушкарев, И. Речкалов, В. Тищенко** тата **Г. Тучков.**

Айӑплисене суд уйӑрса лартнӑ тӑрӑх защитниксен коллегийӗн членӗсем — **А. И. Назаревский, В. И. Якуненко, С. К. Казначеев** хӳтӗлеççӗ.

Военнӑй Трибуналӑн касçи ларӑвӗнче айӑпласа çырнине вуласа панӑ.

Айӑпласа çырнинче, нимӗçсен фашистла захватчикӗсем, Краснодар крайне вӑхӑтлӑха оккупациленӗскерсем, нимӗн айӑпсӑр совет çыннисене, пиншер çынна, массӑллӑн вӗлерсе пӗтернин хӑрушла картинине тӗплӗн кӑтартса панӑ.

Малтан тӗпчесе пӗлнӗ тӑрӑх çаксене палӑртнӑ: çавӑн пек вӗлерессисене, тискер кайӑкла ӗçсене, пусмӑрлассине çаратассине генерал-полковник **Руоф** командир пулса ертсе пыракан нимӗçсен 17-мӗш армин чаçӗсемпе карательнӑй органӗсем туса пынӑ. Çав мӗнпур тискер кайӑкла ӗçсене тӳрремӗнех ертсе пыраççине тата пурнӑçа кӗртессине гестапо шефӗ нимӗç полковникӗ **Кристман** пуçпулса тӑракан Краснодарти гестапо çине хунӑ пулнӑ.

Гестапо составне вӑрттӑн полици ятарласа тунӑ карательнӑй команди, «Зондеркоманда СС—10-а» ятлӑскер, кӗнӗ. Çав команда вара мӗнпур тискер ӗçсене тӳрремӗнех хӑй туса пынӑ.

Следстви çак фактсене тӗпчесе палӑртнӑ: Краснодарти гестапон подвалӗсенче ларакан арестленӗ çынсенчен мӑшкӑллани тата вӗсене çунтарса яни; хулари больницӑра, Березаньти лечебнӑй колонире, çавӑн пекех тата Усть-Лаба районӗнчи «3-ья Речка Кочеты» ятлӑ хуторта вырнаçса тӑракан ачапӑчасен крайри больницинче выртакан чирлӗ çынсене массӑллӑн вӗлерсе пӗтерни.

Юлашкинчен, совет çыннисене ятарласа тунӑ «душегубка» ятлӑ автомашинӑсем ӑшӗнче углерод йӳçӗкӗпе пӑчӑхтарса вӗлерни çинчен калакан фактсене те следстви тӗпчесе палӑртнӑ.

«Зондеркоманда СС—10-а» гестапон карательнӑй команди пулса тӑнӑ, унта 200 çынна яхӑн шутланнӑ. Çав асӑннӑ «Зондеркомандӑн» начальникӗ—гестапо шефӗ нимӗç полковникӗ **Кристман,** совет çыннисене вӗлерсе пырас ӗçре ӑна тӳрремӗнех пулӑшса тӑракансем—нимӗç офицерӗсем: Раббе, Босс, Сарго, Сальге, Ган, Эрих Мейер, Пашен, Винц, Ганс Мюнстер, нимӗçсен тӗрмери тата гестапори çар врачӗсем—Герцпа Шустер, çавӑн пекех тата гестапо сотрудникӗсем—тӑлмачӑсем Якоб Эйкспа Шерлерлан пулса тӑраççӗ.

Кунсӑр пуçне гестапо явӑçтарнипе мӗнпур тискер кайӑкла ӗçсене çак çынсем, çак ӗç тӑрӑх айӑпланакан сутӑнчӑксем—**В. Тищенко, Г. Тучков, И. Речкалов, М. Ластовина, Н. Пушкарев, Г. Мисан, Ю. Напцок, И. Парамонов, И. Котомцев, В. Павлов, И. Кладов** хутшӑннӑ.

Тӗпчесе тӗрӗслесе Краснодар крайӗнче нимӗçсен фашистла захватчикӗсем тунӑ тискер ӗçсен çакӑн пек конкретнӑй фактӗсене палӑртнӑ:

Краснодара йышӑнса илсенех, мирлӗ çынсене тӑтӑшах тыта-тыта массӑллӑн арестлесе хупнипе Краснодарти гестапо подвалӗсем çынсемпе лӑках тулса ларнӑ. Çав нимӗн айӑпсӑр çӗршер те пиншер çынсен ӗçӗсем тӑрӑх нимӗнле «следстви» те туман. Арестленисене çав тери тискеррӗн хӗнесе асаплантарнӑ, вӗсен кунçулӗ пирки ӗçе гестапо шефӗ—полковник Кристман хӑйӗн ирӗкӗпе хӑй татса панӑ, вӑл арестленисене вӗлерессипе çинчен приказсем панӑ.

1942 çулхи кӗркунне пуçласа нимӗçсем совет çыннисене вӗлермешкӗн ятарласа тунӑ автомашинӑсемпе усӑ курма тытӑннӑ. Çав машинӑсене çынсем «душегубка» тесе ят панӑ.

«Душегубкӑсем» 5—7 тоннӑллӑ кӑвак тӗслӗ хупӑ грузовиксем, дизель-моторлӑскерсем, пулса тӑраççӗ. Çав машинӑсене малтан цинкланӑ тимӗр çапнӑ, ун кузовӗн кайри пайӗнче икӗ енне лле уçӑлса сывлӑш тухми тачӑн хупӑнакан алӑк пур. Кузов урайӗнче решетка пур, ун айӗнчен вара моторӑн тӗтӗм тухакан трубипе çыхӑнакан труба каять. Дизель-мотор ӗçленӗ хыççӑн тухакан газсем, углерод йӳçӗкӗ питех те нумай тытакаскерсем, машина кузовне кӗреççӗ. Çав газсем вара машина ӑшӗнче ларакан çынсене хӑварт пӑчӑхтарса вӗлереççӗ.

Çынсене гестапо çуртӗн, Орджоникидзе урамӗнчи 61-мӗш çуртра вырнаçнӑскерӗн, подвалӗнчен илсе тухса «душегубка» çине эрнере темиçе хутчен, январь уйӑхӗнче вара, нимӗçсем Краснодартан чакса тухиччен, кунне иквиçӗ хутчен тиесе кайнӑ. Тиессине ялан тенӗ пекех гестапо шефӗн заместителӗ, вӑлах гестапо тӗрмин начальникӗ капитан **Раббе** ертсе пынӑ. Арестленисене малтан хывӑнтарнӑ, унтан «душегубка» ӑшне 60—80-шар çын тиенӗ, унӑн алӑкне сывлӑш тухми тачӑ питӗрсе хупӑ, машина вара ӗçлекен моторпа темиçе минута хушши вырӑнта чарӑнса тӑнӑ та противотанковӑй шӑтӑк патнелле, вӗçмелли приборсем тӑвакан завод хыçӗнне вырнаçнӑскер патнелле, кайнӑ. «Душегубкӑна» ялан тенӗ пекех «Зондеркоманда СС—10-а» командӑри полицейскисен конвойӗ сыхласа пынӑ. Противотанковӑй шӑтӑк патӗнче çынсене, çул тӑрӑх газсемпе пӑчӑхса вилнӗскерсене, сӗтӗре-сӗтӗре кӑларса нимӗн йӗркесӗр çӗр айне пытарнӑ. Машина ӑшне ялан тенӗ пекех арçынсемпе хӗрарӑмсене тата ачасене пӗрле тиенӗ.

Совет çыннисене вӗлермелли çав калама çук тискер меслете нимӗçсем темӗнле пытарма тӑрӑшнӑ пулин те, вӑхӑт иртнӗ май, гестапопа юнашар пурӑнакан çынсем, вӗсем урлӑ вырӑнти ытти çынсем те çав машинӑсем мӗн тума кирлӗ пулни çинчен пӗлнӗ.

«Душегубкӑсем» çинчен арестленисем те пӗлнӗ. Машина çине лартнӑ чухне вӗсем хирӗç тӑма тытӑннӑ, гестапо картишӗнче кӑшкӑрнӑ тата йынӑшнӑ сасӑсем илтӗнсе тӑнӑ, çавна пула гестаповецсем çынсене машина ӑшне вӑйпа ирӗксӗрлесе тӗрте-тӗрте кӗртнӗ. Çав мӑнтарнӑ çынсем кӑшкӑрни машина моторне ӗçе янӑ хыççӑн сӳнсен шӑпланса пынӑ, унӑн ӑшӗнчи çынсем вара вилсе пӗтнӗ.

Свидетельница Евдокия Федоровна **Гажик,** пӗр 5 çулхи ачаллӑ хӗрарӑма «душегубка» машина ӑшне ирӗксӗрлесе лартнине сӑнаса тӑнӑскер, çапла кӑтартса панӑ:

«Çав «автобус» ӑшне гестаповецсем пӗр 30 çулхи хӗрарӑма вӑйпа тӗртсе кӗртме тытӑнчӗç. Хӗрарӑм машина ӑшне кӗмест, хирӗç тӑрать тата пӗрмаях хыçра тӑракан 4—5 çулхи хӗрача патнелле туртӑнать. Хӗрача вара çапла кӑшкӑрать: «Анне, анне эпӗ те санпала пыратӑп». Арестленӗ хӗрарӑма çӗнтерме пултараймансине, гестаповец хӗрачана ярса тытрӗ те унӑн туттине сӑмсине темӗнле çурма-шӗвек, хура япалапа сӗрсе ячӗ. Ача часах тӑнсӑр пулса кайса ӳкрӗ, гестаповец вара ӑна тытса машина ӑшне ывӑтрӗ.

Мӗн пулса иртнине курса, ача амӑшӗ хытӑ çухӑрма тытӑнчӗ те гестаповец çине ывтӑнчӗ. Темиçе секунда хушши кӗрешнӗ хыççӑн гестаповец халран кайнӑ, хӗрарӑма машина ӑшне сӗтӗрсе кӗме пултарчӗ».

«Душегубкӑсем» ӑшӗнче арестленӗ çынсене кӑна мар, массӑллӑ облавӑсем тунӑ чухне урамсенче ӑнсӑртран тытнӑ çынсене те вӗлернӗ.

Противотанковӑй лакӑма уçса пӑхнӑ чухне фашистла мерзавецсем вӗлернӗ çынсем хушшинче корзинкӑсем тата ытти тӗрлӗ япаласем тытнӑ çын виллисене те тупнӑ. Çав япаласемпе çынсем хулана, пасара тата ытти çӗре кайма тухнӑ пулнӑ. Пӗррӗмӗш номерлӗ совхоз районӗнчи противотанковӑй лакӑма чавса пӑхсан, нумай вилесем тупнӑ, вӗсене чылайӗшне кайран тӑванӗсем палласа илнӗ.

Çапла, сӑмахран, Краснодар çынни Николай Кузьмич **Коломийцев** хӑй арӑмӗн Раиса Ивановна **Коломийцевӑн** виллине палласа илнӗ. Ӑна гестапо 1943 çулхи февралӗн 2-мӗшӗнче арестленӗ пулнӑ. «Краснолит» заводри рабочи Василий Николаевич **Петренко** хӑй арӑмӗн Вера Зиновьевнӑн, 7 çулхи Юрий ятлӑ ывӑлӗн тата 3 çулхи Ина ятлӑ хӗрӗн виллисене палласа илнӗ. Петренко арӑмне ачисемпе пӗрле çавӑн пекех 1943 çулхи февралӗн 2-мӗшӗнче арестленӗ пулнӑ. Краснодар хулинчи Георгиевски чиркӗвӗн священникӗ **Ильяшев** Краснодар хулинчи хӑй паллакан çынсене—Кирилл Луганскине, Владимир Головатыя тата ыттисене те палласа илнӗ.

1942 çулхи август уйӑхӗнче Краснодар хулинчи, больницӑна гестапо врачӗ **Герц** нимӗç пынӑ. Вӑл больницӑра миçе çын тата мӗнле çынсем выртни çинчен сведенисем пухнӑ. Çавӑн хыççӑн часах **Герц** çав больницӑна нимӗçсен темиçе офицерӗпе пынӑ. Вӗсем больницӑна пӑхса çаврӑннӑ та кайнӑ.

Августӑн 22-мӗшӗнче **Герц** больницӑн главнӑй врачӗ патне—**Балашев** доктор патне пынӑ та ӑна тата ытти врачсене те çапла пӗлтернӗ: нимӗç командованийӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, чирлисене больницӑран «катертмелле», тенӗ. Часах больницӑн картишне «душегубка» пырса кӗнӗ. Унта чирлисене вӑйпах хӑвалаçа кӗртме тытӑннӑ.

Пӗррӗмӗш рейсра машина çине 80 çынна яхӑн тиенӗ пулнӑ, машина ӑсаннӑ та часах таврӑннӑ. Юлашки 2 сехет хушшинче машина 4 рейс тунӑ, пӗтӗмпе вӑл чирлисене 300 çынна ытла илсе кайнӑ. Вӗсене пурне те çӳлерех кӑтартнӑ майпа вӗлерсе пӗтернӗ, вӗсен виллисене вара вӗçмелли приборсем тӑвакан завод çывӑхӗнчи противотанковӑй лакӑма кӑлара-кӑлара ывӑтнӑ.

Çав фактсене хӑйсен куçӗсемпе курнӑ **Макаров, Кантонистов, Мохно** тата ыттисем кӑтартса панӑ тӑрӑх тӗпчесе палӑртнӑ.

Сӑмахран, **Мохно** свидетель çапла кӑтартса парать:

«Темиçе рейс тунӑ хыççӑн, çав машина чирлӗ арçынсем выртакан корпус патне те пычӗ. Нимӗç офицерӗ—мӗнле те пулин шума пултаракан арçынсене пурне те салтӑнтарса машина патне илсе тухма хушрӗ. Кунта татах шав пуçланчӗ, чирлисем йынӑшма, кӑшкӑрма тытӑнчӗç, анчах нимӗçсем тискер кайӑксем пек хӑтланаççӗ, вӗсем чирлӗ çынсене тытаççӗ те машина ӑшне тӗрте-тӗрте кӗртеççӗ; йывӑр чирлисене вара носилкӑсем çинче йӑтса тухса машина ӑшне пӑрахрӗç».

Пӗринче çапла чирлӗ çынсене машина çине тиенӗ вӑхӑтра больница территорийӗ çине унччен чылай малтан больницӑран выртса тухнӑ Краснодар çынни Иван Иванович Котов справка илме пырса çитнӗ. Машина çине тиенине сӑнаса тӑракан нимӗç офицерӗсенчен пӗри Котова курсан, ӑна ярса тытнӑ та «душегубка» ӑшне тӗртсе кӗртнӗ. Машина алӑкӗ хупӑнса ларса, машина малалла кайма тытӑнсан, Котов хӑй пӑчӑхма пуçланине туйса илнӗ, унтан вара вӑл аялти кӗпине çурнӑ та ӑна хӑйӗн шӑкӗпе йӗпетсе, çӑварӗпе сӑмсине хупласа хунӑ. Кӑштах вӑхӑт иртсен вӑл тӑнсӑр пулса кайнӑ, кайран противотанковӑй лакӑмра кӑна тӑна кӗнӗ. Унта вӑл нимӗн йӗркесӗр пӑрахса тултарнӑ виллесем хушшинче выртнӑ. Çав лакӑмран тухса, Котов киле таврӑннӑ.

Следствире **Котов** çакна кӑтартса панӑ:

«...Машина патӗнче тӑракан нимӗç ӑнланмалла мар сӑмахсемпе темӗн çухӑрашса ман çинелле ывтӑнчӗ, мана хыçран пиншак çухавӗнчен ярса тытрӗ те машина ӑшне тӗртсе кӗртрӗ. Мана машина ӑшне пӑрахнӑ чухне, унта çынсем нумайччӗ: Миçе çын пулни çинчен калама пултараймастӑп. Кунта арçынсемпе хӗрарӑмсем пулнӑ. Машина ӑшӗнче питӗ тӑвӑрччӗ. Çынсем пӗр-пӗрин çумне çыпçӑнса тӑратчӗç. Çынсем йынӑшатчӗç, кӑшкӑрашатчӗç, макӑратчӗç. Вӗсем хӑйсене валли нимӗçсем темӗнле асаплӑ вилӗм хатӗрленине туйса пачах та ӑсран кайнӑччӗ. Мана хыççӑн машина ӑшне татах тепӗр 5 çынна пӑрахрӗç, унтан вара машина алӑкӗ хупӑнса ларчӗ, тепӗр темиçе минутӑран машина вырӑнтан хускалса кайрӗ. Машина кайма тытӑнсан, эпӗ хам пӑчӑхма пуçланине туйса илтӗм. Эпӗ хам çирӗн кӗпене çурса илтӗм те, ӑна шӑкпа йӗпетсе тутапа сӑмсана хупласа лартрӑм, çакӑн хыççӑн мана сасартӑках сӑмӑл пек туйӑнса кайрӗ».

Краснодар больницинчи чирлӗ çынсене вӗлерсе пӗтернӗ хыççӑн, унта 20 койка кӑна лартнӑ пулнӑ, çав койкӑсем çине чирлӗ çынсене çӗнӗрен илнӗ. Анчах тӗрӗссипе больницӑн çав отделенийӗ çынсемшӗн танатӑ кӑна пулнӑ, мӗншӗн тесен гестапо врачӗ **Герц** çӗнӗрен выртнӑ чирлисем патне икӗ хутчен пырса, вӗсене «душегубка» çине тиесе иле-иле кайнӑ.

1942 çулхи сентябрӗн 5-мӗшӗнче çав гестаповец **Герц** Березаньти лечебнӑй колонине пынӑ та çав колонин главнӑй врачне **Киреева, Шаповалова** врач умӗнче, çапла каланӑ: сентябрӗн 7-мӗшӗнче чирлӗ çынсене илме машина килет, вӗсене вӗлерсе пӗтермелле пулать, тенӗ. **Киреев Герцран** сывалма пуçланӑ çынсене, ялхуçалӑх ӗçӗсенче ӗçлекенсене те пулин, хӑварма ыйтнӑ. **Герц** çакӑнпа килӗшнӗ те сывалма пуçланисене уйрӑм çуртра куçарма хушнӑ. Сентябрӗн 7-мӗшӗнче ирхине «душегубка» колоние пырса çитнӗ те ун ӑшне чирлӗ хӗрарӑмсене, малтан çапла-çарамаслантарса, тиеме пуçланӑ. Чирлисенчен нумайӗшӗсем хирӗç тӑма пӑхнӑ, анчах вӗсене «душегубка» ӑшне вӑйпах тӗрте-тӗрте кӗртнӗ.

Пӗтӗмӗшпе вара Березань колонийӗнчен чирлисене 320 çынна турттарса тухса кайса вӗлерсе пӗтернӗ пулнӑ, вӗсен виллисене колонирен 5 километрта вырнаçса тӑракан противотанковӑй лакӑма пытарнӑ.

Çакӑн хыççӑн тепӗр темиçе кун иртсен, колоние гестапо офицерӗ Ганс **Мюнстер** пуç пулса тӑракан нимӗçсен ушкӑнӗ пырса çитнӗ. Çав ушкӑн колонин мӗнпур пуянлӑхӗсемпе çимӗçӗсене çаратса пӗтернӗ.

1942 çулхи октябрь уйӑхӗнче колоние Краснодартан 17 чирлӗ çынна илсе пынӑ пулнӑ, вӗсене кайран çав «душегубка» ӑшӗнчех вӗлернӗ. Сывалма пуçланӑ çынсем, **Герц** ирӗк панӑ тӑрӑх хӑварнӑскерсем пирки калаçан, вӗсене Ганс **Мюнстер** приказӗ тӑрӑх, 1942 çулхи октябрӗн 20-мӗшӗнче, пӗтӗмпе 60 çынна, грузовик çине тиенӗ те противотанковӑй лакӑм патне илсе кайса, пере-пере пӑрахнӑ. Çакӑн умӗн чирлисенчен пӗри, Маруся ятлӑскер, хаярланса кайса кӑшкӑрса янӑ: «Пирӗннисем килеççӗ, вӗсем пирӗншӗн тавӑрӗç», тенӗ. **Мюнстер** çав чирлӗ хӗрарӑма винтовка приклачӗпе хӗнесе, унӑн пичӗпе пуçне юн тухиччен çӗмӗрсе пӗтернӗ. **Дубунцов** ятлӑ чирлӗ çын тарма хӑтланнӑ, анчах ӑна винтовкӑран персе вӗлернӗ.

1942 çулхи сентябрьте нимӗçсем чирлӗ ачасене, Краснодар крайӗнчи Усть-Лаба районӗнчи «3-я Речка Кочеты» ятлӑ хуторта вырнаçса тӑракан крайри ача-пӑча больницинче выртакаскерсене, вӗлерсе пӗтерессине те çавӑн пек меслетпех организациленӗ. Çав больницӑна гестапо офицерӗ Эрих **Мейер** тата тӑлмачӑ Якоб **Эйкс** пырса кунӑ.

1942 çулхи сентябрӗн 21-мӗшӗнче больница патне пӗр «душегубка» тата тепӗр çӑмӑл машина пырса çитнӗ, çӑмӑл машина çинче врач **Герц** тата ытти пӗрле темиçе нимӗç пулнӑ. «Душегубка» ӑшне трусиксемпе майкӑсем кӑна тӑхӑннӑ 42 ачана, чирлӗскерсене, вырнаçтарнӑ. Вӗсене çӳлерехре кӑтартнӑ меслетпе вӗлерсе пӗтернӗ. Ачасен виллисене унччен темиçе кун малтан «Чернышевка» хуторӗн районӗнче Мейерпа Эйкс хушнӑ тӑрӑх, зенитнӑй оруди лартма тесе, вырӑнти çынсене ятарласа чавтарнӑ пысӑк лакӑма пӑрахнӑ.

Çак ӗç тӑрӑх малтан следстви туса пынӑ май нимӗçсен фашистла палачӗсем вӗлернӗ çынсене пытарнӑ лакӑмсене 13 тӗлте чавса пӑхнӑ тата суд медицини тӗлӗшпе экспертиза туса тӗрӗсленӗ. Çав вырӑнсенче тупнӑ калама çук нумай виллесенчен 623 виллене, вӗсенчен 85 ача виллине, 256 хӗрарӑм виллине тата 282 арçын виллине, вӑл шутра 198 старик виллине, суд медицини енӗпе тӗрӗслесе пӑхнӑ.

Суд медицини, суд химийӗ тата спектроскопи тӗлӗшпе пур енчен те тӗрӗслесе пӑхнӑ тӑрӑх, СССР Наркомздравӗн суд медицинин главнӑй экспертӗ **В. И. Прозоровский** доктор, РСФСР Наркомздравӗн суд медицинин главнӑй экспертӗ **В. М. Смольянинов** доцент, Хӗрлӗ Çарти суд медицинин главнӑй экспертӗ медицина наукисен докторӗ **М. И. Авдеев** профессор, Мускав хулинчи суд медицини экспертизин консультантӗ **П. С. Семеновский** доктор тата суд химикӗ **С. М. Соколов** тӑракан эксперт комиссийӗ **çакӑн пек** заключени тунӑ: тӗрӗслесе пухнӑ тӑрӑх 523 çын вӗсене углерод йӳçӗкӗпе пӑчӑхтарнӑ сӑлтава пула вилнӗ, 100 çын вара пӑшалсенчен пенипе вилнӗ, вӗсене нумайӗшне пуçӗсенчен пенӗ пулнӑ.

Экспертсен комиссийӗ хӑйӗн заключенийӗнче çакна кӑтартса парать: дизель-мотор ӗçленипе пулакан газсем хупӑ помещение кӗрсен, çав газсенчи углерод йӳçӗкӗ чӑннипех те çынна вӗлерме пултарать.

Комисси çакна палӑртнӑ:

«Углерод йӳçӗкӗ (вӑл шутра мотор ӗçленипе пулакан газсем те) хупӑ помещенире тухса тӑраççӗ пулсан, çав помещенире углерод йӳçӗкӗ питех те хӑвӑрттӑн пухӑнса пырать, çакӑ вара çынна темиçе минута хушшинче (5—10 минута хушшинче) вӗлерме пултарать».

Çапла вара суд медицини экспертизин материалӗсем малтанлӑха тӗпчесе пӗлнӗ данннӑйсене—гестапо органӗсем совет гражданӗсене, Краснодарти гестапора хупса усракаскерсене, çавӑн пекех тата ытти мирлӗ çынсене, чирлисене, çитӗннисемпе ачасене те, Крас-

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан

СУД ПРОЦЕСĔ

(ЮЛАШКИ)

…нодар больницине, Березаньти лечебнăй колонире тата крайри ача-пăча больницинче выртакан чирлисене, тискер кайăкла массăллăн вĕлерсе пĕтерни çинчен калакан даннăйсене пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе парçĕ.

«Душегубка» машинăпа усă курса пăчăхтарса вĕлернĕ совет гражданĕсен пĕтĕм хисепĕ 7.000 çынна çитет.

Айăпласа çырнинче çавăн пекех тата çынсене массăллăн арестлени тата Краснодарти гестапора совет гражданĕсене асаплантарни тĕрĕслесе пĕлнĕ обстоятельствисене тĕплĕн кăтартса панă.

Гестапо подвалĕсенче арестленисене капăрĕ кунах хĕненĕ. Гестаповецсем вĕсене шомполсемпе, патаксемпе тискеррĕн хĕненĕ, урасемпе тапнă, вĕсен чĕрнисем айне булавкăсем чикнĕ тата ытти те. Çавăн пек асаплантарнă хыççăн кăларан кайнă тата паллама çук сĕмĕрĕлсе пĕтнĕ çынсене подвалсене пăрахнă.

Арестленисене асаплантарас тĕлĕшпе Краснодарти гестапон шефĕ полковник **Кристман** тата гестапо врачĕ **Герц** уйрăмах тискеррĕн хăтланнă.

Свидетельница **Мирошникова**, пĕр вăхăт хушши гестапора хупса усранăскер, çапла кăтартса панă:

«Эпĕ Краснодарти гестапон 1—1-мĕш камеринче ларнă вăхăтра Вера Бровник, Ирина Яценко, Груня Григорьева тата ытти нумай совет хĕрĕсене, хĕрарăмĕсене, вĕсене çавтери хĕнесе пĕтернĕ хыççăн, допросран камерăна таварăннине эпĕ хам куçпа курнă. Вĕсем каласа панă тăрăх, гестапо офицерĕсем вĕсене, малтан çаппа-çарамаслантарса, чăпăркксемпе, урасемпе хĕненĕ. Камерăна таварăнакан хĕрсен çурăмĕсем йăлтах суранланса юнланса пĕтнĕ, вĕсенчен хăшне-пĕрне, çавăн пек хĕнесе пĕтернĕскерсене, пĕччен çĕре пăрахатчĕç, вĕсене унта шыв пачах памасчĕç, е парсан та хытă таварланă шыв паратчĕç».

Гажин свидетельница кăтартса панă тăрăх, хупнă çынсем ларакан подвалсенчен пулăшу ыйтса йынăшнă сасăсем тăтăшах илтĕнсе тăнă. Хупнă çынсем çакăн пек кăшкăрнине час-часах илтме пулнă: «Пĕр çăвар шыв парăр-ха е çăкăр татăкĕ те пулин парăр. Ачасем вилеççĕ!»

Хĕрлĕ Çар наступленийĕ пуса пынă пирки Краснодар хулинчен тарса тухас умĕн гитлеровецсем çавтери тискер çĕнĕ ĕç тунă.

1942 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче «Зондеркоманда СС—10-а» ятлă командăн Ган офицер ертсе пыракан отрячĕ гестапо çуртне вут тивертнĕ. Çулăм хăвăрт сарăлса пыни тата малтанах хурса хăварнă минăсем çурăла-çурăла кайни подвалсенчи чĕрĕллех çунакан çынсене çăлса хăварма май паман. Хупнă çынсенчен пĕри кăна çулăмран сиксе тухма пултарнă, унăн хуппаматне пĕлме май килмен, мĕншĕн тесен вăл хăй тÿссе ирттернĕ асапсене пула тата писсе кайнă пирки çавăн хыççăн часах вилнĕ. Çакна ăна **Рожкова**, **Доброва**, **Гажин** свидетельсем тата айăпланакан **Пушкарев** кăтартса панисем çирĕплетеççĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, арестленĕ совет çыннисен, гестапо çуртне вут тивертсе янă чухне асаплă вилĕмпе пĕтнĕскерсен, хисепĕ 300 çынна çитет. Гестапо подвалĕсенче кайран тупнă хăшпĕр çуннă вилесем çинче çав тери тискеррĕн хĕнесе асаплантарнă йĕрсем паларса тăнă. Çапла, сăмахран, çав вилесем хушшинче вăтам çулхи паллă мар арçынăн виллине тупнă, унăн аллисене касса пăрахнă пулнă.

Совет гражданĕсене мĕнле те пулин ытларах вĕлерсе пĕтерме тискер кайăкла ĕмĕтленсе, нимĕçсен фашистла вăрăхурахĕсем нимĕнле ирсĕр провокацисем умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Çапла, сăмахран, пĕррехинче хулари çынсене Çĕнĕ пасарта вылянăх ÿпке-пĕверĕсем сутаççĕ, тесе пĕлтернĕ. Çавăн пек пĕлтернине ĕненсе, выçă аптăранă çынсем кăлартнă выранă пуханнă. Ÿпке-пĕвер вырăнне унта полицейскисемпе нимĕç салтакĕсем тиенĕ хупнă машина пырса çитнĕ. Çав машина ăшĕнче паллă мар краснофлотеца ларса пынă пулнă. Ăна çавăнтах, пуханнă халăх умĕнчех, юпа çине çакса вĕлернĕ. Юлашки самантра краснофлотец, куççульпе макăракан халăх еннелле çаварăнса, çапла кăшкăрнă:

«Ан макăрăр! Халăх палачĕсем хăйсен пиллĕр пурнăçĕсене парса ответ тытĕç. Часах хамăрăннисем килеççĕ, вĕсем вара пурин шĕн те таварĕç».

Тепринче тата хулари халăха нимĕç командованийĕ çапла пĕлтернĕ пулнă: Хĕрлĕ Çарăн тыткăна лекнĕ темиçе пин боецне хула витĕр илсе тухаççĕ, вĕсене апат-çимĕç парса пулăшма халăха ирĕк панă, тенĕ. Çавна пула Краснодар хулинчи нумай çынсем, хăйсемпе пĕрле парнесемпе çимĕçсем илсе, урама тухнă, анчах советăн тыткăна лекнĕ çыннисем вырăнне вĕсене хирĕç нимĕçсен аманнă салтакĕсем ларса пыракан автомашинăсене янă. Çавăнтах вара фото тата кино аппарачĕсемпе ÿкерсе илнĕ. Çакă вара, нимĕç провокаторĕсен шухăшĕпе, совет гражданĕсем нимĕç салтакĕсене «кĕтсе илнине» кăтартса памалла пулнă.

Тĕрĕслесе паларнă çав тери тискер ĕçсене пĕрле пĕтĕçтерсе, айăпласа çырнинче çакна кăтартса панă: Краснодар хулипе Краснодар крайне оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер усал ĕçсемшĕн, нимĕн айăпсăр совет гражданĕсене, çав шутрах ватă çыннисемпе хĕрарăмсене тата ачасене асаплантарса мăшкăллананшăн, массăллăн пере-пере вĕлернĕшĕн тата ятарласа тунă машинăсем ăшĕнче пăчăхтаракан газсемпе тискеррĕн вĕлерсе пĕтернĕшĕн, çунтара-çунтара янăшăн тата ытти тĕрлĕ майсемпе вĕлернĕшĕн пĕтĕм ответлăха — Германин вăрă-хурахла фашистла правительствин тата нимĕç командованийĕн руководителĕсем, уйрăмăн илсен, 17-мĕш армин командующийĕ генерал-полковник **Руоф**, çавăн пекех тата çав тискер ĕçсене тÿрремĕнех тăвакансем—çаксем ответ тытаççĕ:

Кристман—полковник, Краснодарти гестапо шефĕ

Раббе—капитан, гестапо шефĕн заместителĕ

Сальге—гестапо офицерĕ

Сарго—гестапо офицерĕ

Пашен—гестапо офицерĕ

Босс—гестапо офицерĕ

Винц—гестапо следователĕ

Ган—гестапо офицерĕ

Мюнстер Ганс—гестапо офицерĕ

Мейер Эрих—гестапо офицерĕ

Герц—гестапо врачĕ

Шустер—гестапо врачĕ

Эйнс Якоб—гестапо сотрудникĕ

Шертерлан—гестапо сотрудникĕ.

Вĕсемпе пĕрлех, çав тискер кайăкла усал ĕçсемшĕн çак ĕç тăрăх айăплама тăратнă çынсене: **В. Тищенкона, Г. Тучкова, И. Речкалова, М. Ластовинăна, Н. Пушкарева, Г. Мисана, Ю. Напцока, И. Парамонова, И. Котомцева, В. Павлова, И. Кладова** айăплаççĕ.

Вĕсем пурте малтанлăха тĕпчесе тĕрĕсленĕ чухне хăйсене айăплă тесе йышăннă тата хăйсен сутăнчăкла ĕçĕсем çинчен, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем туса пыракан тискер кайăкла ĕçсене хутшăнни çинчен тĕплĕн кăтартса панă.

Айăпланакансене пурне те РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 58—1 «а» тата 58—1 «б» статьисем тăрăх айăплаççĕ. Çак ĕçе пăхса тухасси темиçе куна пырать.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан

СУД ПРОЦЕСĔ

Н. хули, июлĕн 14-мĕшĕ. Çурçĕр Кавказ фрончĕн Военнăй Трибуналĕ сучĕ умне çĕршыва сутакансен, тăшмана пулăшакансен, Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем тунă тискер ĕçсене активлăн хутшăннăскерсен, ушкăнĕ тăчĕ.

Тулли залра çĕршер ĕççынисем—Н. хулинчи предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисем, интеллигенци представителĕсем, станицăсенчен килнĕ колхозниксем лараççĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Кубань çинчи хуласемпе станицăсенче улттă уйăх хушши тискеррĕн хуçаланнине çак залра ларакансенчен нумайĕшĕсем хăйсен куçĕсемпе курнă. Гитлерла оккупантсем вĕсенчен нумайĕшĕнне тăванĕсемпе çывăх çыннисене асаплантарса вĕлернĕ, нумай çул хушши ĕçлесе пухса пынă пурлăха çаратса пĕтернĕ, нумай çынсене килсĕр-çуртсăр тăратса хăварнă.

Çак ĕçе судăн уçă ларăвĕнче пăхса тухаççĕ.

Айăпланакансене пĕлес шутпа кĕскен ыйтса тухнă хыççăн тата суд ларăвне пынă свидетельсемпе паллашнă хыççăн, суд Председателĕ юстици полковникĕ Майоров юлташ айăпласа çырнине вуласа парать.

Айăпласа çырнине залра ларакансем питех те пысăк тимлĕхпе итлеççĕ. Айăпласа çырнинче нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем—тăван çĕршыва сутакансем тунă тискер ĕçсен хăрушла картинине уçса панă. Совет халăхĕ çав тискер ĕçсене кам тунине пĕлет, айăпласа çырнинче вĕсен хушамачĕсене кăтартса панă. Вĕсем — Гитлерăн вăрă-хурахла правительстви, нимĕçсен 17-мĕш армин командующийĕ генерал-полковник Руоф, Краснодарти гестапо начальникĕ полковник Кристман тата ăна пулăшаканĕсем—нимĕç офицерĕсем, тĕрме врачĕсемпе тăлмачĕсем. Вăхăт çитĕ, çав ирсĕрсем пурте суд умне тăрĕç, паян вĕсемпе пĕр каварлисем—тăван çĕршыва сутнă 11 изменник ответ тытнă пекех, пурте хăйсен преступленийĕсемшĕн пĕтĕмĕшпех ответ тытĕç. Нимĕç палачĕсемпе пĕрле çав ирсĕрсем совет çыннисене асаплантарнă, нимĕç эсрелĕсем пухăнласа кăларнă хăрушла машина—«душегубка» ăшне совет çыннисене тĕрте-тĕрте кĕртнĕ, вĕсем углерод йÿçĕкĕпе пăчăхтаракан машинăна сыхласа пынă, совет çыннисен виллисене машинăран сĕтĕрсе кăларса противотанковăй лакăмсене пăрахнă, карательнăй экспедицисен ĕçĕсене хутшăннă.

Айăпласа çырнине вуласа панă хыççăн суд Председателĕ панă ыйту çине ответлесе, айăпланакансем пурте хăйсене пĕтĕмĕшпех айăплă тесе йышăннă. (ТАСС).

Агитаци ĕçне вăйсăрлатрĕç

СОВЕТСКОЕ. Кăçалхи çуракине Мăн Пакăш ялсоветне кĕрекен колхозсем йăнăçлăн ирттерчĕç. Вăл вăхăтра агитаци ĕçне те çÿллĕ пусăма лартнăччĕ. Стена хаçачĕсем йĕркеллĕ туха тăратчĕç. Агитаторсемпе яланах канашлусем туса ирттеретчĕç.

Анчах та хальхи вăхăтра агитколлективăн руководителĕ О. Кадыкова хăйĕн ĕçĕ çинче сиксе ирттерет пăхать. Колхозниксем хушшинче нимĕнле агитацилле-ăнлантарулă ĕç те курăнмасть.

Май уйăхĕнчен вара кунти пĕр колхозра та стена хаçачĕсем тухман, ялсовет исполкомĕ çумĕнчи стена хаçатне кăларманни икĕ уйăх çитрĕ. Çавăнпа та колхозсенчи ĕçсем юлса пыраççĕ. Икĕ колхозĕ силос хывман, вăрлăх участокĕсене те çумран тасатман.

Ялсовет территорийĕнче коммунистсемпе комсомолецсем, учительсем, советла колхоз активĕ пур. Çавах та вĕсем агитацилле-массăллă ĕç хăйсен тыслă обязанноçĕ пулса тăнине шута илмен-ха

Як. СИГАЙ.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Аш-какайпа сĕт-çу Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе ССР Союзĕн Аш-какайпа сĕт-çу Халăх Комиссариачĕ хатĕрлÿ организацийĕсемпе апат-çимĕç предприяти работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Юнгăри çу заводне (Сĕнтĕр районĕ) виççĕмĕш преми памалла тунă.

Пысăк награда илнине ĕçпе ответлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. «Большевик» завод (директорĕ Шустин юлташ) 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртура мала тухса, Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн тата ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Наркомачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш премие илчĕ.

Çак пысăк награда илнине завод коллективĕ тата тухăçлăн ĕçлесе ответлет.

— Июнь уйăхĕнче завод пĕтĕм продукци кăларас плана 121,3 процент пурнăçланă. Июль уйăхĕнче 150 процентран кая мар пурнăçлама пулатпăр. Хĕрлĕ ялава хамăр аллăран вĕçертместпĕр,—теççĕ рабочисемпе работницăсем.

Заводри паллă стахановецсем Моторин, Гогин слесарьсем июнь уйăхĕнчи задание 200—250 процент пурнăçларĕç. Электромонтер Ширшов, тимĕрçĕ Закалябин юлташсем ĕç планне ялан 280—300 процент таран пурнăçласа пычĕç. Хĕрлĕ ялав тата пĕрремĕш преми илнĕ ятпа заводра социализмлă ăмăрту татах та вăйлăнрах сарăлса кайрĕ. Кашни рабочипе работница июль уйăхĕнче халиччен хинчен лайăхрах ĕçлессишĕн кĕрешеççĕ.

Н. ИВАНИЦКИЙ.

Хĕрлĕ ялав илнĕ ятпа

КАНАШ, июлĕн 16-мĕшĕ. (**Хамăр корр., телефонпа**). Ĕнер горпромкомбинатра Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш премие илнĕ ятпа рабочисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ Никитин тата Вырăнти промышленность наркомĕ Егоров юлташсем пулчĕç.

Горпромкомбинат (управляющийĕ Шлапак юлташ) июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци тата ширпотреб енĕпе 152 процент тултарнă. Пĕрремĕш çурçулхи плана 90 процент ирттерсе пурнăçланă. Пухура Никитин тата Егоров юлташсем тухса каларĕç. Никитин юлташ пуринчен ытла çĕнĕ тĕслĕ япаласем туса кăларас ĕç çинче чарăнса тăрать. Горпромкомбинатăн обозсем юсакан цехĕ кирлĕ пек ĕçлесе пыраймасть. Час-часах чарăнса ларать. Ку цеха кĕске вăхăт хушшинчех ĕçе ямалла, цехсене механизацилессишĕн тăрăшмалла.

Юлашкинчен Никитин юлташ Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Шлапак юлташа парать. Хĕрлĕ ялава алла илсе, Шлапак юлташ ответлă сăмах калать.

— Çак награда пире малашне те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хушать. Эпĕ Хĕрлĕ ялава ялапах хамăр алăра тытса тăма шантаратăп. Горпромкомбинат коллективĕ çак пысăк награда çине икĕ-виçĕ хут ытларах ĕçлесе ответлĕ,—тет вăл.

Пухура стахановецсемпе ударниксем те тухса каларĕç. Вĕсенчен, кашниех хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илсе, июль уйăхĕнче тата тикĕнерех ĕçлеме пулчĕç.

Юлашкинчен горпромкомбинатри социализмлă ăмăртура уйрăмах паларнă работниксене премилерĕç.

ФЗО шкулĕнче

— Ачасем, киле кайма тăхтăр-ха, паян сирĕнпе кĕске калаçу ирттеретĕп,—терĕ Шупашкарти пĕр ФЗО шкулĕн директор помощникĕ Иванова юлташ.

Килелле тухма тапранă ачасем пурте чарăнчĕç.

Хĕрлĕ кĕтесре шăп. Кашниех Иванова юлташ мĕн çинчен каласса кĕтсе тăраççĕ.

— Çамрăк рабочисем, эпĕ вунай каламастăп. Сире эпĕ малалла кашни кун хамăр мĕнле ĕçлесе пынипе паллаштаратăп.

Иванова юлташ малтанах ачасене июнь уйăхĕнче мĕнле ĕçлесе пынипе паллаштарчĕ.

Июнь уйăхĕнче ФЗО шкулĕ производство планне пур ĕçсемпе те 116 процент пурнăçланă, 96 пин тенкĕлĕх продукци кăлармалла пулнă пулсан, 112 пин тенкĕлĕх кăларнă. Пуринчен ытла ĕçре 2-мĕшпе 8-мĕш группăра вĕренекенсем паларса тăраççĕ. 2-мĕш группăри мастер М. Смелая юлташ ачасене юратса вĕрентет. Вĕренекен ачасем хушшинче вăл пысăк авторитетпа усă курать. Унăн группинче вĕренекенсем 84 процент «отлично» тата «хорошо», 16 процент «посредственно» вĕренсе пыраççĕ.

8-мĕш группăн мастерĕ Свердлов юлташ та ачасене тĕплĕн вĕрентсе пырать. Унăн цехĕ июнь уйăхĕнчи задание 145 процент пурнăçланă. Июль уйăхĕнче тата тухăçлăрах ĕçлет.

Шкулта токарь ĕçне вĕренекенсем Ваня Жуков, Хрисанова, пулас слесарьсем Алексеева, Павлова, Л. Цветкова ĕç нормине 200 процент ытла тултараççĕ.

— Маттур эсир, ачасем. Эсир лайăх ĕçленĕшĕн хам та савăнатăп,—тет мастер Свердлов юлташ.

Чăнах, вĕсем мĕнле ĕçленине курсан, савăнмасăр тăма çук. Вĕсен ĕçне курса: «Кунта та фронт иккен», тесе калас килет.

Ф. МАЛЫШКИН.

СИЛОС БАШНИ ПУШĂ ЛАРАТЬ

ÇĔРПУ. Районри хăшпĕр колхозсем вылăх-чĕрлĕх валли силос хатĕрлес плана ирттерсе тултарчĕç. «Новая сила» колхоз планпа пăхнинчен 15 тонна ытларах силос хатĕрлерĕ. «Оборона» колхоз 50 тонна, «Красная Паварния» колхоз 100 тонна, «Союз» колхоз 60 тонна силос хыврĕç. Çавăн пекех «Цивильстрой», «Социализм çулĕ», «Ĕмĕт» колхозсем те силос хывас плана çак кунсенчех пурнăçа кĕртеççĕ.

Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, силос хывмалли вунăкунлăх районра начар пырать. Хăшпĕр колхозсем силос хывас ĕçе халĕ пачах та тытăнман. «Кĕçĕн Ямаш», «Кульмет», «1905-мĕш çул» колхозсенче ку тĕлĕшпе пачах тăрăшмаççĕ. «1905-мĕш çул» колхозăн силос хывмалли башни те хатĕр, анчах пĕр тонна та силос хывман.

И. МАЛГАЙ.

Пирĕн авиаци Орел чугунçул узелĕ çине тата тăшманăн Болхов хули патĕнчи склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă

Июлĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем Орел чугунçул узелĕ çине тата тăшманăн Болхов хули патĕнчи боеприпассен склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Орел чугунçул узелĕнче бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Тăшманăн боеприпассем тата çар техники тиенĕ чугунçул составĕсем çуннă.

Тăшманăн Болхов хули çывăхĕнчи склачĕсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă. Бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнипе боеприпассен икĕ пысăк склачĕ сирпĕнсе кайнă.

Пирĕн пĕр самолет хăйĕн базине таврăнман.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН СИЦИЛИ УТРАВĔ ÇИНЕ АННА ВОЙСКИСЕН ВĂРÇА ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Сицили утравĕн вуннăмĕш пайне йышăнса илнĕ. Халĕ вĕсем утрав çине шалалла, утрав центрĕ патнелле куçса пыраççĕ. Тăшман хирĕç тăни вăйлă мар. Союзниксен çухатăвĕсем пысăк мар.

Утрав çинче ку таранччен тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 12.000 çын ытла тыткăна илнĕ.

Французсен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, французсен войскисем те Сицили çине аннă. Вĕсем те союзниксемпе пĕрлех утрав центрнелле куçса пыраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Сицилин хĕвелтухăç енчи çыранĕнче итальянецсен çыранри 206-мĕш дивизине пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Аугустăри гаваньпе портри сооруженисем союзниксен аллине нимĕн сиенленмесĕр тенĕ пекех лекнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер союзниксен авиацийĕн пысăк соединенийĕсем нимĕçсен Францири авиаци базисене атакăланă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, «вĕçекен крепоçсем» йышши самолетсем кăна тăшманăн 45 истребительне ытла пĕтерсе тăкнă.

ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИСЕМ СОЮЗНИКСЕН СУДНИСЕН КАРАВАННЕ ТАПАННĂ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тинĕс министерствинче çапла калаççĕ: тăшманăн подводнăй лодкисен пысăк флотилийĕ союзниксен Англирен Çурçĕр Африкăна каякан транспорт суднисен пысăк караванне тапаннă. Союзниксен караванне хÿтĕлесе пыракан суднăсем тăшмансен икĕ подводнăй лодкине путарнă. Пĕр подводнăй лодкин командине тыткăна илнĕ. Çав лодкăн союзниксем хушшипе ирĕксĕрех шыв çине çиеле тухмалла пулнă. Тăшманăн подводнăй лодкисем союзниксен икĕ вăтам виçелĕ пароходне путарнă, виççĕмĕшне вут тивертсе янă, анчах та ку пароход порта çитнĕ.

БОЛГАРИН ГОСУДАРСТВО ЗАЕМĔ ПУТЛАНСА ЛАРНĂ

СТАМБУЛ, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарирен çапла пĕлтереççĕ: «государствăн обязательнăй заемне» вырнаçтарасси Болгарире пĕтĕмĕшпех путланса ларнă. Болгарире унта нумаях пулмасть закон кăларнăччĕ. Çав закон тăрăх мĕн пур организацисемпе предприятисем тата ахаль çынсем те государствăн çĕнĕ заемĕн облигацийĕсене обязательнăй йĕркепе илмелле пулнă. Çав заема кам мĕн чухлĕ илмеллине вырăнти влаçсем кăтартса памалла пулнă, вăл сумма ахаль çынсен е предприятисен пурлăх хакĕн 2 процентĕнчен пуçласа 10 проценчĕ чухлĕ пулмалла пулнă. Заем кампанийĕ пуçлансан малтанхи кунсенчех питĕ пысăк йывăрлăхсем сиксе тухнă. Вара Болгарин финанс министерстви государство тăрăх 200 финанс инспекторĕ кăларса янă. Çав инспекторсене хăйсен пурлăхĕ мĕн хак тăни çинчен деклараци памасăр тăрса заем илессинчен пăрăнакансене пурне те çирĕп ответ тытма право панă. Çав инспекторсем палăртнă тăрăх, деклараци памасăр тăракансем ытла та нумай пулнă. Çавна пула декларацисем памалли срока тăсма тивнĕ. Анчах ун пек туни те усăллă пулман. Вара финанс министерстви декларацисем памалли срока тата тепĕр хут тăснă. Болгари пичечĕнче çырнă тăрăх, ку таранччен «деклараци пани çинчен пĕлтерекен хыпарсем провинцисенчен ытла та сахал» килеççĕ. Çапла ĕнтĕ, питех те шавласа кăларнă çĕнĕ заем пĕтĕмĕшпех путланса ларнă.

АМЕРИКА МОРЯКĔСЕН ПРОФСОЮЗĔН СЪЕЗЧĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркра производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен морянсен профсоюзĕн съезчĕ пулса иртнĕ. Унта 200 делегат пулнă. Вĕсене 50 пин моряк суйласа янă. Съезд Европа континентĕнче халех иккĕмĕш фронт уçма чĕннĕ. Мĕншĕн тесен халĕ, тесе палăртнă съезд, Гитлерăн пĕтĕм хĕçпăшаллă вăйĕсен 80 проценчĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра çапăçать, тенĕ.

Профсоюз хăйĕн забастовкăсем тумастпăр тесе панă сăмахне тепĕр хут çирĕплетнĕ, США вăрçă тĕлĕшпе туса пыракан мероприятисене вăйлăн пулăшса пыма пулнă, мĕншĕн тесен тĕнĕл держависемпе фашизма пĕтерсе лартасси Америкăри кашни рабочин тĕп тĕллевĕ пулса тăрать. Съезд делегачĕсем горнянсен пĕрлешуллĕ профсоюзĕн председателĕн Льюисăн ĕçĕсене сивленĕ. Льюис хĕтĕртнипе горнянсен забастовки пуçланса кайнăччĕ. Льюис ĕçĕсем сутăнчăкла ĕçсем пулаççĕ, тесе палăртнă съезд, мĕншĕн тесен унăн ĕçĕсем Берлинпа Токиоран хушнă тăрăх Америка правительствине сирпĕтсе ямашкăн пăлхав пуçласа янипе танах шутланаççĕ, тенĕ. Съезд правительствăна Льюиса тытса хупма каланă, çавăн пекех тата Америка çĕршывĕн ырă пурнăçне сиен кÿрекен шалти тăшмансен ĕçĕсене тĕрĕслеме сĕннĕ. Çавăн пек çынсен шутĕнче съезд çаксене асăннă: конгресс членĕсем—Уйлер, Най, Дайс, Фиш, издательсем—Паттерсон, Маккормик, Говард. Çавăн пекех съезд Ку-клукс-клан членĕсен ĕçĕсене тата çавăнпа пĕрлех Америкăра фашизм майлă ĕçлесе тăракан ыттисен ĕçĕсене те тĕрĕслеме хушнă, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен провокацийĕсемпе США-н вăрçă мероприятийĕсене сиен кÿме хăтланаççĕ.

Съезд Рузвельтран çыру илнĕ. Вăл çырура Рузвельт морянсен профсоюзĕ вăрçă вăхăтĕнче забастовкăсем тумастпăр тесе панă сăмаха кăмăлласа хапăл туни çинчен пĕлтерсе çырать. «Пирĕн карапсене океансем тăрăх илсе çÿрекен çынсем,—тесе çырать Рузвельт,—пĕтĕм тĕнчешĕн паха ĕç тăваççĕ. Эпĕ ĕненсе тăратăп: вĕсем пĕтĕм тĕнчене сарăлнă çак вăрçа хăвăртрах пĕтерессишĕн хăйсен пĕтĕм вăй-халне хурса ĕçлĕç».

ПОЛЬШАН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра çакăн çинчен пĕлтернĕ: Польша президенчĕ Польшăн премьер-министрĕ пулма Станислав Миколайчика лартнă. Миколайчик çĕнĕ правительство тунă. Правительствăпа çаксем кĕреççĕ: премьер-министрăн заместителĕ, вăлах промышленность, суту-илÿ тата шыв транспорчĕн министрĕ—Ян Кванянский, ют çĕршывсен ĕçĕсен министрĕ—Тадеуш Ромер, наци оборонин министрĕ—Кукель генерал тата ыттисем те.

КĔСКЕН

▲ Югославин пысăк хулисенчи халăха августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа çăкăр сутма пачах пăрахасси çинчен пĕлтернĕ. Мăшкăлласа çав хуласенчи халăха хăйсене кирлĕ тырпула хăйсенех тупса хатĕрлесе хума хушнă.

Пĕлтерÿ

Июлĕн 18-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра лекци пулать. Лекци теми: **«СССР-ĕн тулти лару-тăрăвĕ»**.

Лекцие ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ **Шапиро** юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасла илемлĕ

АКТРИСА

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сценарийĕ—Эрдманпа Вольпинăн.

Постановки—Сталинла премисен лауреачĕн А. Траубергăн.

Режиссерĕсем—М. Шапирăпа Н. Кошеверова.

Операторĕ—А. Москвин.

Тĕп рольсене вылякансем: республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕ Г. Сергеева тата Сталинла премисен лауреачĕ Б. Бабочкин.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Чăвашгосстраха Управленире ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: ревизорсем, страховой инспекторсем. Районсенчи инспекцисенче ĕçлеме —бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 10, Чăвашгосстрах.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 748 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф 6. 53 84 п. л.